# «Йăмра шăпи хальччен асран тухмасть...»

Паянхи чăваш поэзийĕн анинче сăнарлă сăмах шыравçисем темĕн чухлех. Кашни çыравçăн хăйĕн тĕнче курăмĕ, шухăшлавĕ. Калас тенĕ шухăша сăнарлă ўкерес ăсталăхĕ те, кĕвви-çемми те кашнинех хăйне евĕрлĕ. Николай Аверкиевич Исмуков сăввисем ыттисенчен чылай уйрăмрах. Вĕсем вулакан чĕринче тарăн йĕр хăвараççĕ. Хăш-пĕр сăвăçăн хайлавне вуласа тухсан кăшт вăхăт иртсенех манса каятăн. Николай Аверкиевичăн хайлавĕсем нумайлăха асра юлаççĕ. Сăвă йĕркисем çунатлă сăмахсем пек илтĕнеççĕ, пурнăçри пулăмсене хаклană чухне аса килеççĕ, вăл е ку пулăмăн туп-сăмне тĕрĕс ăнкарма пулăшаççĕ. В. Родионов тĕпчевçĕ Исмуков пултарулăхĕн хăй евĕрлĕхне хакласа "...сăвăçăн хайлавĕсенчи поэзипе философи пĕрлĕхĕ, тарăн шухăша поэзи çунаттисем çине лартса инçете вĕçтерме ăсталăх çитерни" тесе каланăччĕ. Çавăн пекех Исмуков пултарулăхĕнче хальччен каламан сăнарлă шухăш илемĕ тапса тăрать. Пурнăçăн улшăнуллă саманчĕсенче чăвашлăх, çынлăха, хăвна хăв упраса хăварасси тата ытти нумай ыйту канăç памасть поэт-философ чĕрине.

Эпĕ Н.А. Исмуковăн "Лаштра йăмра" сăввине пăхса тухасшăн. Вăл 1990-мĕш çулта тухнă "Çĕр юрри" кĕнекене кĕнĕ. Автор йăмра сăнарĕ урлă халăх пурнăçĕн пĕр ўкерчĕкне, репрессие пула ним айăпсăр нуша кăтартнă вăхăта сăнарлăн çутатса панă. Чăн-чăн поэт хура халăх нуши-тертне курмасăр иртме пултараймасть. Исмуков чĕринчен Сталин репрессийĕн урапи аякран иртмен, ахăр. Çак синкерлĕ вăхăта сăнлакан "Лаштра йăмра" хайлава репрессие лекнĕ кукашшĕне Илья Филиппова халалланă автор. Кунта ун çинчен тўрремĕн каламан пулин те - инкеклĕ çыннăн шăпи сисĕнет. Эппин вуласа тухар-ха "Лаштра йăмра" сăвва:

Лаштра кăна йăмра, лаштра йăмра
Ўсетчĕ ĕлĕк пирĕн урамра.
Сар кайăксем ларатчĕç ун çине,
Саркаланса юрлатчĕç юррине.
Çулла, хĕвеллĕ шăрăх кунсенче

ТИШКЕРЎ

Выляттăмăрччĕ ун сулхăнĕнче.
Хĕлле ҫил чарăнатчĕ те унта
Хуллен мĕн пуплешетчĕ-ши унпа...

Ай, тĕк тăмасть тĕнче, ай, тĕк тăмасть.
Йăмра шăпи хальччен асран тухмасть:
Е кĕвĕҫтернĕ вăл кĕлмĕҫсене,
Е тарăхтарнă вăл тиексене. –
Тĕпрен касса антарчĕҫ те ăна
Сыпăласа ăсатрĕҫ хулана.
Ҫулҫисене пăрахрĕҫ йыт айне,
Юррисене хĕстерчĕҫ хул айне.

Урам илемĕ пĕттĕр терĕҫ пуль,
Йăмра йăхне ан пултăр терĕҫ пуль –
Тапта-тапта пытарчĕҫ вуллине
Ял тулашне, Ҫăл Атăк хĕррине.
Йăмра вырăнĕнче халь тунката
Пăсса хăварнă ҫурт пек, тупата.
Ҫил чарăнса тăмасть унта текех,
Ҫул ҫаврăнса кĕмест унта текех.

Эй, ырă ҫут ҫанталăкăм, тавах, –
Никам та мар - эс тивĕҫ мухтава:
Тапта-тапта пытарнă турата
Эс чĕрĕлĕх вăйне паратăн та
Кĕлле кĕрсе пиллетĕн кун ҫути,
Каллех ҫĕклетĕн пĕлĕте ҫити.
Ҫук вĕчĕхӳ санра, ҫук кĕвĕҫӳ,
Ыр тăвасси ҫынна – мĕнпур ĕҫӳ.

Тавах, тавах! Паян ял хĕрринче
Вире енчен вĕрен ҫил хумĕнче
Кашлаҫҫĕ кăрнатир пек йăмрасем –
Хура ҫĕрпе шур пĕлĕт ачисем.

* * *

Ут утланса-ши иртрĕ утмăл ҫул. –
Утса-чупсах кĕскелчĕ утма ҫул.
Анчах паян кунччен те асăмра
Лаштра кăна йăмра, лаштра йăмра...

Сăвва аса илӳ евĕр йĕркеленĕ. Ахаль куçпа пăхсан сăвăра лирика геройĕ хайсен ураменче ӳснĕ "лаштра йăмрашăн" тунсăхлать темелле. Анчах та чунне çав тунсăхран та пысăкрах синкер пусса тăрать иккен. Сăвăçа йăмра шăпи инкек тӳснĕ çывăх çыннине аса илтерет.

Сăввăн малтанхи çавринчех тăван тавралăх, ял, урам кĕвви тапать: куç умне тăнăç пурнăçпа пурăнакан ял сăн-сăпачĕ тухать. Саркаланса лаштра йăмра ӳсет, ун çине сар кайăксем ларса саркаланса юрлаççĕ: ачи-пăчи йывăç сулхăнĕнче вылять, çил те йывăçпах пуплет. XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенчи пурнăç таппи евĕклĕн те илемлĕн сывлать. Çут çанталăк сăнарĕ сăвăра лирикăллă геройăн шухăш-кăмăлне, туйăмне, ĕмĕт-тĕллевне ĕнентерӳллĕ уçса пама май парать, вăл наци хăй евĕрлĕхне палăртатă. Йăмра - пурнăç йывăçĕ. Йăмра шăпи урлă халăх шăпин хăй евĕрлĕхне кăтартнă. Чăваш çыннишĕн унран асамлă йывăç çук та пулĕ. Вăл - хӳтĕлевçĕ те, сиплевçĕ те, тĕрек те, сапăрлăх та... Ватă йăмра усал-тĕселе, инкек-синкеке сирет, вăй парать. Çуллахи кунсенче тип-шартан, вут-çулăмран сыхлать.

Çулла, хĕвеллĕ шăрăх кунсенче
Выляттăмăрччĕ ун сулхăнĕнче.

Хĕл кунĕсенче сивĕ çилтен пытанма май туса парать.

Хĕлле çил чарăнатчĕ те унта
Хуллен мĕн пуплешеччĕ-ши унпа...

Çуркунне вара йăмра чи малтан кăчкă çурса кăларать. Йăмрапа çыхăннă ваттисен сăмахĕ те сахал мар. Ăна чылай чăваш çыравçи хайлавĕсен сăнарĕ тунă. Чăваш арçынĕ ывăл çуралсан йăмра лартать. Вăл - ял илемĕ, тăван халăх йăмрана хисеплет, юратать. Йăмра - ял йывăçĕ. Тăнăçлăхпа лăпкăлăх, илемлĕхпе киленĕç символĕ. Çак пархатарлă йывăç ĕмĕр тăрăшшĕпех этеме, хайĕн шанчăклă тусне, усă кӳрет.

Этем мĕн ĕлĕкрен пурнăçне йывăçпа танлаштарнă. Йăмра чăвашăн юратнă йывăçĕ темелле. Кунта вăл пуринчен ытла çын сăнарне йышăнать: "пуплешетчĕ", "ăсатрĕç", "пытарчĕç" та. ыт. те.

Пĕрремĕш çавра тăнăç пурнăç еккипе килентерсе шухăша ярать пулсан, иккĕмĕш çавра синкерлĕ пулăма малтанхи йĕркерех кĕртсе ӳкерет.

Ай, тĕк тăмасть тĕнче, ай, тĕк тăмасть.
Йăмра шăпи хальччен асран тухмасть...

Малалла вулатăн та поэтăн тĕп кĕввине туйтăн. Вăл халăх пурнăçĕн илемлĕ те савăк енĕсене ӳкерме ытлах кăмăлламаннине сисетĕн. Кунта Василий Кервен сăмахĕсене аса илни вырăнлă: "Поэт (Исмуков Н.А.) ытларах чухне пурнăçăн хитре енĕсене мар, трагедилле пулăмĕсене ӳкерсе кăтартать". Иккĕмĕш çаврара сăнарланнă ӳкерчĕк халăх пурнăçне синкерлĕ пулăм хупласа хунине, этем пурнăçне ним вырăнне те хуман саманана куç умне кăларать:

Е кĕвĕçтернĕ вăл кĕлмĕççене,
Е тарăхтарнă вăл тиексене.

Тĕпрен касса антарчĕç те ăна
Сыпăласа ăсатрĕç хулана.

Кĕлмĕçсем хуçаланнă, тиексем хĕрĕннĕ вăхăтсем, XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче халăх йăли-йĕркипе культурине йыт айне пăрахнă, шухăш-ĕмĕтне татнă. Юрри-кĕввине хĕстернĕ вăхăтсен сивĕ сывлăшĕ кӳ-ӳ килет вулакан умне. Ынатлă, çăтмахри евĕр илемлĕ пурнăç туххăмрах чăл-пар саланать. 30-мĕш çулсем илсе килнĕ репресси пăчки-пуртти урам илемне кӳрсе ларакан пурнăç йывăççине тĕпрен касса ярать. Йăмра асапа лекнĕ этем сăнарĕ. Кунта çакна палăртса хăвармалла. Исмуков лирикин вăйăмĕ - пĕр-пĕр япалана е пулăма, е ĕç хатĕрне символла пĕлтерĕш кӳнинче. Йывăçăн пӳкле вилĕмĕ - этемлĕхшĕн тискер самана илсе килнĕ синкерлĕх. Поэт йăмрана касса антарнăшăн çеç хурланмасть. Тункати те "пăсса хăварнă çурт" вырăнĕ пек курăнать. Вуллине те "тапта-тапта пытарчĕç" тет. Автор йăмра сăнарне уйрăм çын шăпипе танлаштарать. Сăвва тимлĕн вуламасан çавна асăрхамастăн та. Хайлаври самана тăвăлне тӳссе курнă вулакан куçĕпе пăхсан "Лаштра йăмра" сăвă урам илемне кӳрсе ларнă уйрăм йăмра шăпине кăна пĕлтерменни куç кĕрет. Йĕркесен янăравлăхĕ те ӳкерсе панă пурнăç чăнлăхне çывăх. Ямб виçеллĕ анафора калас тенĕ шухăша ĕнентерӳллĕн куç умне кăларать. Сăпатлантару (чĕрĕ мар япалана чĕрĕ пек кăтартни) йывăçпа пуплекен çил, "юррисене хĕстерчĕç хул айне" тени шухăша аталантарать.

Малтанхи икĕ çаврара ура çинче çирĕп тăракан, пурнăç йĕрки-куркине чухлакан, илеме юратакан геройăн шăпи кĕтмен-туман çĕртен репресси арманĕн чулĕ айне епле кĕрсе ӳкнине куртăмăр. "Сармантей" саманин саккăрлăхĕпе тамашин тăххăрлăхĕн тути-маси аван сисĕнет.

Лирика геройĕ никама та вăрçмасть, ылханмасть.

Урам илемĕ пĕттĕр терĕç пуль,
Йăмра йăхне ан пултăр терĕç пуль.

Чун тĕпĕнче упранакан ĕненӳпе шанăç хĕлĕхĕсем хура çĕрпе, шур пĕлĕтпе çыхăннă.

Тапта-тапта пытарнă турата
Эс чĕрĕлĕх вăйне паратăн та
Кĕлле кĕрсе пиллетĕн кун çути,
Каллех çĕклетĕн пĕлĕте çити.

Çут çанталăк хăвачĕ – никам çĕнтерейми тĕрĕс те пархатарлă. Вăл темле лару-тăрăва та хăйне юравлă йĕркелекен, татса паракан пĕртен-пĕр тӳре. Поэт пурнăçра чăннипех те ăна шаннине куратпăр:

Çук вĕчĕхӳ санра, çук кĕвĕçӳ,
Ыр тăвасси çынна – мĕнпур ĕçӳ.

Çынна тĕрлĕ сăлтав тупса тĕп тума тăрăшни те кăлăхах. Пурнăçăн хăйĕн йĕрки, саккунĕ:

Тавах, тавах! Паян ял хĕрринче
Вире енчен вĕрен çил хумĕнче

Кашлаççĕ кăрнатир пек йăмрасем –

Хура çĕрпе шур пĕлĕт ачисем.

Çапла вара "Лаштра йăмра" сăвăпа Исмуков тăван халăх историйĕнчи пĕр саманта сăнарласа кăтартать. Халăхăн пурнăçне йывăçпа танлаштарни питех те вырăнлă. Кунта Хусанкай кăмăлĕ те сисĕнет:

Каснă, вăтăрнă пире,

Кăкласа хăртман та мар-тăр.

Вăрлăх юлнă пур пĕрех,

Эпир пулнă! Пур! Пулатпăр!

"Лаштра йăмра" – çыннăн пурнăçри тивĕçĕ, чысĕ, хакĕ çинчен тарăннăн шухăшласа çырнă философилле хайлав. Н.Исмуковăн пĕтĕм пултарулăхĕнче çакă тĕп вырăн йышăнать. "Ахăр самана" трагедийĕ – пирĕн халăх историйĕнчи чуна ыраттармалли хăрушă вăхăт çинчен тарăн шухăша ямалла сăвăласа çырнă философиллĕ трагеди, чăн-чăн эпопея. Унта та автор репресси авăрне лекнĕ çынсен шăпине сăнать. "Лаштра йăмра" сăвă "Ахăр самана" трагедин эпиграфĕ евĕр туйăнать.

**Николай ОСИПОВ,**

**филологи наукисен кандидачĕ**

---



*Николай Николаевич ОСИПОВ – И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедрин доценчĕ, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ. 1978 çулхи раштавăн 25-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Çăл Атăк ялĕнче çуралнă. 1996 çулта Çĕньялти вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Унтах 2003-2006 çулта аспирантурăра вĕреннĕ. 2006 çулта "Леонид Агаковăн прозин илемлĕ тĕнчи" темăпа кандидат диссерацине хӳтĕленĕ.*

*Хальхи чăваш литературин аталанăвĕн сăн-сăпатне тишкерет. Монографи, вĕренӳ пособийĕсем тата ăслăлăх статйисем çырнă. Хальхи вăхăтра чăваш литературинчи кĕçĕн жанрсен аталанăвне тĕпчет.*